**Асли çук çăкăртан**

Халăх ĕмĕр çапла шухăшлать:
Çĕр çинче асли çук çăкăртан.
Ял ĕçченĕ хирте тар тăкать
Уншăн чунĕ çунать ун ялан.

Тус-тăваннăм, çакна эс ан ман:
Çĕр çинче асли çук çăкăртан.
Пуç тайса хисепле эс ăна,
Вăй та пурăç парать вăл сана.

Çăкăр вăл – çĕр аннемĕр парни,
Вăл пулсан – эпир вăйлă, пуян.
Ĕçлĕ халăх ăна хаклани
Ĕмĕртен вăл пырать, авалтан.

Ачаран пултăр пирĕн асра:
Тĕпретме юрамасть çăкăра.

Пирĕн пурнăç хăвачĕ унта,
Унăн ячĕ ялан чи малта.

*Давыдов-Анатри, В. Асли çук çăкăртан : [сăвă] / В. Давыдов-Анатри // Чăваш литературин антологийĕ. – Шупашкар, 2015. – [Т. 4] : Ача-пăча валли çырнă хайлавсем. – С. 159.*